Ҫ1-мӗш ҫул ҫуралнӑ. Хӗвӗ 20 ҫул.

1945
МАРТ
8
КЕҪНЕРНИКУН
45(6796) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

# ЧӐВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

## ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

*Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине*
**Совет Союзӗн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ**
*Фронт штабӗн начальникне*
**Генерал-полковника ЗАХАРОВА**

УКРАИНАРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, Карпат тӑвӗсен тӑрӑхӗнчи сӑртлӑ-вӑрманлӑ вырӑнти йывӑр условисенче тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, паян, мартӑн 7-мӗшӗнче, Чехословаки территорийӗнче БАНСКА ШТЯВНИЦА хулине—нимӗҫсен сборонин вӑйлӑн тӗреклетнӗ пунктне—тӑртса илнӗ.

БАНСКА ШТЯВНИЦА хулине тӑртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: МАНАГАРОВ генерал-лейтенантӑн, ЯКОВЛЕВ генерал-майорӑн, ОСТАШЕНКО генерал-майорӑн, ТЕРЕНТЬЕВ генерал-майорӑн, ОГОРОДОВ генерал-майорӑн, ПРЕОБРАЖЕНСКИЙ генерал-майорӑн, ЗДАНОВИЧ генерал-майорӑн, ЕСИН генерал-майорӑн, СОБОЛЕВ полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн ФОМИНАН, артиллери генерал-майорӗн ЗЫКОВАН, АЛЕКСЕЕВ полковникӑн, ФЕФЕЛОВ полковникӑн, ПАСТУХ полковникӑн, ВЛАДИМИРОВ полковникӑн, САПОЖНИКОВ полковникӑн, НЕКРАСОВ полковникӑн, ЛЕОНТЬЕВ подполковникӑн, КИСЛЫЙ подполковникӑн, БРЕЕВ подполковникӑн, ШАЛИМ подполковникӑн, ЛЯНСКИЙ майорӑн артиллеристсӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн КУРКИНАН, СУПЯН полковникӑн, ОВЧАРОВ подполковникӑн, АНТОНОВ подполковникӑн, ТРОШИН подполковникӑн танкистсӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ГОРЮНОВАН, авиаци генерал-лейтенантӗн СЕЛЕЗНЕВАН, авиаци генерал-лейтенантӗн СТЕПИЧЕВАН, авиаци генерал-майорӗн КАМАНИНАН, ЧАНПАЛОВ полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенантӗн ЦИРЛИНАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ТУПИЧЕВАН, ИСАЕВ полковникӑн саперӗсем; сыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенантӗн ЛЕОНОВАН, МАКАРЕНКО полковникӑн, государство хӑрушсӑрлӑх полковникӗн КАРПОВАН связистсӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, БАНСКА ШТЯВНИЦА хулине тӑртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе ҫӑссене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, мартӑн 7-мӗшӗнче, 21 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, БАНСКА ШТЯВНИЦА хулине тӑртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, БАНСКА ШТЯВНИЦА хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

*Верховный Главнокомандующи*
*Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.*

1945 ҫулхи мартӑн 7-мӗшӗ. № 293.

## ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

*Белоруссири 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине*
**Совет Союзӗн Маршалне РОКОССОВСКИЕ**
*Фронт штабӗн начальникне*
**Генерал-полковника БОГОЛЮБОВА**

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем паян, мартӑн 7-мӗшӗнче, ГНЕВ (МЕВЕ) тата СТАРОГАРД (ПРЕЙСИШ СТАРГАРД) хулисене—нимӗҫсен ДАНЦИГ хули патне пымалли вырӑнсенчи оборонин тӗреклетнӗ паха пункчӗсене—ҫапӑҫса тӑртса илнӗ.

ГНЕВ тата СТАРОГАРД хулисене тӑртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-полковникӑн, ТРУБНИКОВ генерал-полковникӑн, БАТОВ генерал-полковникӑн, ЛОГУНОВ генерал-лейтенантӑн, КОКОРЕВ генерал-лейтенантӑн, БОБКОВ генерал-лейтенантӑн, ПОЛЕНОВ генерал-лейтенантӑн, ФЕТИСОВ генерал-майорӑн, ХАБАРОВ генерал-майорӑн, ЧУВАКОВ генерал-майорӑн, ЭРАСТОВ генерал-лейтенантӑн, АЛЕКСЕЕВ генерал-лейтенантӑн, ЛЯЩЕНКО генерал-майорӑн, РАДЫГИН генерал-майорӑн, БОРЩОВ генерал-майорӑн, КОЛЧАНОВ генерал-майорӑн, ДЕМИДОВ генерал-майорӑн, ИГНАТЬЕВ генерал-майорӑн, КУРЕНЬ полковникӑн, ЧЕСНОКОВ полковникӑн, СОННИКОВ полковникӑн, РАХИМОВ генерал-майорӑн, ЯКУШЕВ генерал-майорӑн, ГРЕБЕННИК генерал-майорӑн, МАКАРОВ генерал-майорӑн, ТЕРЕМОВ генерал-майорӑн, ВЕЛИЧКО полковникӑн, БОРИСОВ генерал-майорӑн, ФРОЛЕНКОВ генерал-майорӑн, ДЖАНДЖГАВА генерал-майорӑн, АФАНАСЬЕВ полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн СОКОЛЬСКИЙЕН, артиллери генерал-лейтенантӗн ДЕГТЯРЕВАН, артиллери генерал-майорӗн КАЗАКОВАН, артиллери генерал-майорӗн ДМИТРИЕВАН, артиллери генерал-майорӗн ПЯДУСОВАН, артиллери генерал-майорӗн РОГОЗИНАН, ГОРОБЕЦ полковникӑн, БЕЛЯЕВ полковникӑн, ДЕГТЯРЕНКО полковникӑн, АКИМУШКИН полковникӑн, КОРОЛЕВ полковникӑн артиллеристсӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-лейтенантӗн ЧЕРНЯВСКИЙЕН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенантӗн ПОПОВАН, МИРОНОВИЧ полковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн НОВАКАН, СОМОВ полковникӑн, ТУРЕНКОВ полковникӑн, ДАВИДЕНКО полковникӑн, ПИВНЕВ полковникӑн, ИГОНИН полковникӑн, АНТИПОВ полковникӑн, ЖАБИН майорӑн танкистсӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ВЕРШИНИНАН, авиаци генерал-майорӗн БОРИСЕНКАН, авиаци генерал-лейтенантӗн ОСИПЕНКАН, авиаци генерал-майорӗн ГЕТЬМАНАН, ТИХОМИРОВ полковникӑн, КАЛУГИН полковникӑн, СМОЛОВИК полковникӑн, ВУСС полковникӑн, ДОДОНОВ полковникӑн, ПОКАЕВОЙ полковникӑн, ВОЛКОВ полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн БЛАГОСЛАВОВАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ШВЫДКОЙАН, АЛЕКСАНДРОВ подполковникӑн, ВИЗИРОВ полковникӑн, БАБАЕВ полковникӑн саперӗсем; сыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн БОРЗОВАН, БАХИЛИН полковникӑн, БОРИСОВ полковникӑн, МИХАЙЛОВ полковникӑн, ХОМЯКОВ полковникӑн связистсӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, ГНЕВ тата СТАРОГАРД хулисене тӑртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе ҫӑссене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, мартӑн 7-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, малта асӑннӑ хуласене тӑртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ГНЕВ тата СТАРОГАРД хулисене ирӗке кӑларассишӗн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

*Верховный Главнокомандующи*
*Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.*

1945 ҫулхи мартӑн 7-мӗшӗ. № 294.

## ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

*Белоруссири 1-мӗш фронт ҫарӗсен командующине*
**Совет Союзӗн Маршалне ЖУКОВА**
*Фронт штабӗн начальникне*
**Генерал-полковника МАЛИНИНА**

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла наступлени туса пырса, паян, мартӑн 7-мӗшӗнче, ГОЛЛНОВ, ШТЕПЕНИТЦ тата МАССОВ хулисене—нимӗҫсен ШТЕТТИН хули патне пымалли вырӑнсенчи оборонин тӗреклетнӗ паха пункчӗсене—штурмласа тӑртса илнӗ.

Малта асӑннӑ хуласене тӑртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: БЕЛОВ генерал-полковникӑн, СИМОНЯК генерал-лейтенантӑн, ПУЛКО-ДМИТРИЕВ генерал-лейтенантӑн, БУКШТЫНОВИЧ генерал-майорӑн, ВЕРЖБИЦКИЙ генерал-майорӑн, СИЯЗОВ генерал-майорӑн, КАЗАНКИН генерал-лейтенантӑн, МОШАЛКОВ полковникӑн, МАКАРОВ генерал-майорӑн, МАСЛОВ полковникӑн, СЕРЕГИН полковникӑн, ВЛАДИМИРОВ генерал-майорӑн, ШАФАРЕНКО генерал-майорӑн, СМИРНОВ генерал-майорӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-майорӗн ЕГОРОВАН, артиллери генерал-майорӗн ЗРАЖЕВСКИЙЕН, ЗЕРНОВ полковникӑн, артиллери генерал-майорӗн ПЫЛИНАН, ИВАНОВ полковникӑн, ГРЕХОВ полковникӑн, ЗАЗИРНЫЙ подполковникӑн, ВАСИЛЬЧЕВ подполковникӑн, ГРЕСЬКО подполковникӑн, артиллери генерал-майорӗн БОГДАШЕВСКИЙЕН, КОЗЛОВ подполковникӑн артиллеристсӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ТЕЛЯКОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенантӗн КИРИЧЕНКАН, АБРАМОВ полковникӑн, МАКАРОВ подполковникӑн, ПАВЛУШКО полковникӑн, ОХМАН полковникӑн, МЖАЧИХ подполковникӑн, ТАРАСОВ полковникӑн, КУЗИН подполковникӑн, ВИНОГРАДОВ подполковникӑн, КУЗНЕЦОВ полковникӑн, БАРАНЮК полковникӑн, СЕКУНДА подполковникӑн, ШЕМЯКИН полковникӑн танкистсӗсем; авиаци генерал-лейтенантӗн САВИЦКИЙЕН, авиаци генерал-майорӗн ТАТАНАШВИЛИН, ОРЛОВ полковникӑн, НАКОНЕЧНИКОВ подполковникӑн летчикӗсем; НИКОЛАЕВ подполковникӑн, РЯБКОВ подполковникӑн, СКАЛЬНЫЙ майорӑн, ГРИЦЮК подполковникӑн, ВАНЯКИН подполковникӑн, ПИВОВАРОВ полковникӑн, КОТОВ майорӑн, АБРАМОВ капитанӑн саперӗсем; БОНДАРЕВ полковникӑн, ПОЗНЯКОВ инженер-полковникӑн, ЗАЛЕШИН капитанӑн связистсӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, ГОЛЛНОВ, ШТЕПЕНИТЦ тата МАССОВ хулисене тӑртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе ҫӑссене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, мартӑн 7-мӗшӗнче, 23 сехет те 30 минутра пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ҫӳлте асӑннӑ хуласене тӑртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, малта асӑннӑ хуласене тӑртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

*Верховный Главнокомандующи*
*Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.*

1945 ҫулхи мартӑн 7-мӗшӗ, № 295.

# Совет Информаци Бюровӗнчен

## МАРТӐН 6-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

**БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем икӗ эрне хушши хупӑрласа тӑрса хытӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн тӑшман группировкине ар катса тӑкнӑ та мартӑн 6-мӗшӗнче ГРУДЗЯНДЗ (ГРАУДЕНЦ) хулипе крепоҫне— нимӗҫсен Висла шывӗн анат тӑрӑхӗнчи оборонин хӑватлӑ узелне—тӑртса илнӗ.**

**ГРУДЗЯНДЗ** хулинче ҫапӑҫнӑ чухне фронт ҫарӗсем 5.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ, вӑл шутра—крепость комендантне Фрикке генарал-майора тата унӑн штабне; ҫавӑн пекех тата хӗҫп ӑшалпа ҫар пурлӑхӗ нумай тытса илнӗ.

Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах **ДАНЦИГ** хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланҫинерехре тата хӗвеланҫинерехре фронт ҫарӗсем, малалла тапӑнса пырса, **ТРЕТЕН** хулипе **МАЛЬХОВ** хулине тӑртса илнӗ тата халӑх пурӑнакан ытти 60 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—**АЛЬТ КИШАУ, ВИЛДЕ, ЛЮБОН, ГР ОСС ТУХЕН, ФРИДРИХСХУЛЬД, ФАРЦИН, СЕГЕНТИН, АБТСХАГЕН, АЛЬТ-ШТАЙНОРТ, ЛАЗЕ, ГРОСС МЕЛЛЕН** ятлӑ пысӑк ялсем.

**КЕЗЛИН** хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланҫинерехре **БЕЛОРУССИРИ** 2-мӗш фронт ҫарӗсем хупӑрласа илнӗ тӑшман ушкӑнне пӗтерсе тӑкнӑ, **КЕЗЛИН** округӗн командующине фон Цилов генерал-лейтенанта, унӑн штабне тата пӗр пин нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

**БЕЛОРУССИРИ** 1-мӗш фронт ҫарӗсем, ӑнӑҫлӑ наступление мӑлалла вӑйлатса пырса, мартӑн 6-мӗшӗнче **БЕЛЬГАРД, ТРЕПТОВ, ГРАЙФЕНБЕРГ, КАММИН, ГЮЛЬЦОВ, ПЛАТЕ** хулисене—ҫулӗрсен паха узелӗсене тата нимӗҫсен Хӗвеланҫ Померанири оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене—тӑртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 500 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—**ГРОСС ЕСТИН, ГАРРИН, ТЕССИН, ПРИББЕРНОВ, КАНТРЕН, ХОЕНШЕНАУ, ЛЕНЦ, МОРИЦФЕЛЬДЕ** ятлӑ пысӑк ялсем. **ШИФФЕЛЬБАЙН** хулинчен кӑнтӑртараххра фронт ҫарӗсем тӑшман ҫар ӗҫӗн самаях пысӑк ушкӑнне хупӑрласа илнӗ те ӑна пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ. Мартӑн 4-мӗшӗпе 5-мӗшӗнче фронт ҫарӗсем 2.500 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

Вентрире, **БАЛАТОН** кӳллинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫинерехре тата кӑнтӑртараххра, пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсен атакисене сире-сире янӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ тата разведчиксем шыраса ҫӳренӗ.

Мартӑн 5-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 33 танкине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 57 самолетне персе ӳкернӗ тата унсӑр пуҫне Штаргард хули районӗ ҫинчи аэродромра 43 самолет пӗтерсе тӑкнӑ.

☆ ☆ ☆

### ПИРӖН АВИАЦИ ШТЕТТИН ХУЛИПЕ КЕНИГСБЕРГ ХУЛИНЧИ ВАРҪА ОБЪЕКТСЕНЕ ТАПАННИ

Мартӑн 6-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн йывӑр бомбардировщиксем нимӗҫсен Штеттин хулипе Кенигсберг хулинчи вӑрҫӑ объекчӗсене пырса ҫаннӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула. Штеттин хулинче пушарсем нумай тухнӑ. Пушарсенче взрывсем пулнӑ. Тавар станцийӗн территорийӗнче уйрӑмах вӑйлӑ взрыв пулнӑ.

Кенигсберг хулинче бомбӑсем тӳрех пырса ӳкнипе боеприпас склачӗ сирпӗнсе кайнӑ. ҫавӑн пекех тата темиҫе тӗлте вӑйлӑ пушарсем тухнӑ.

☆ ☆ ☆

Белоруссири 2-мӗш фронт ҫарӗсем паян Грудзяндз (Грауденц) хулипе крепоҫне тӑртса илнӗ, Малтантарах пӗлтернӗ тӑрӑх, икӗ эрне каярах пирӗн ҫарсем, Висла шывӗ тӑрӑх наступлени туса пырса, немӗҫсен Грудзяндз хулинчи гарнизонне хупӑрласа илнӗ. Хулана пырса кӗмелли вырӑнсене авалхи фортсем хӳтӗлесе тӑнӑ. Ҫав фортсене икӗ рет ҫӗнӗ укрепленисем вӑйлатса тӑнӑ. Тӑшман гарнизонӗнче пехотӑпа артиллери чаҫӗсем. ҫавӑн пекех тата танковӑй подразделенисем нумай пулнӑ. Совет ҫарӗсем тӑшмана тимӗр унка хӗссе лартнӑ та Грудзяндз хулине тӑртса илессишӗн ҫапӑҫма пуҫланӑ. Пирӗн питӗ хӑватлӑ артиллери тата гвардиминомечӗсем тӑшман укрепленийӗсене ишнӗ. Пирӗн бомбардировщиксем нимӗҫсен зенитнӑй батарейисене малтанхи кунсенчех пусарса лартнӑ та тӑшмана пӗр вӗҫӗмсӗр пыра-пыра ҫапнӑ. Ҫав тери вӑйлӑн пенине тӳсеймесӗр, нимӗҫсем, дотсемпе фортсенчен тухса, хулана тарса кӗнӗ. Урамсенчи хаяр ҫапӑҫусенче пирӗн штурмлакан ушкӑнсем гитлеровецсенчен квартал хыҫҫӑн квартал тасатса пынӑ. Ҫавӑрса илнӗ тӑшман вӑйӗсен пӗр пайӗ чугун ҫул кӗперӗ районӗнче Висла шывӗн хӗвеланҫ ӗнне каҫнӑ та вӑрмансенче пытанма хӑтланнӑ. Пирӗн пехотӑпа хӑй тӗллӗн ҫӳрекен артиллери, ҫав нимӗҫсене атакӑласа, шыв хӗррине хӗстерсе лартнӑ, вара пӗтерсе тӑкнӑ. Вӑйлӑ ҫапӑҫусем хыҫҫӑн пирӗн ҫарсем хулан кӑнтӑр пайне тӳртса илнӗ те нимӗҫсен юлашки укрепленийӗсене—крепоҫа, ҫар хулине тата Грудзяндз хулин ҫурҫӗр пайӗнчи полигонсене—штурмлама тытӑннӑ. Артиллери вӑйлӑн персе ҫӗмӗрнӗ хыҫҫӑн крепоҫа совет подразделенийӗсем вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Темиҫе сехет хушши вӑйлӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн нимӗҫ гарнизонӗн пурнӑҫӗ пӗтсе ларнӑ. Каземattсемпе пӳхрепсене тарса кӗнӗ нимӗҫсем тытӑкна парӑнма пуҫланӑ. Нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсем, алӑри хӗҫпӑшала ҫӗре пӑрахса, 200-шерӗн—300-шерӗн хӳтӗлӗхсенчен тухма пуҫланӑ. 5.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла, вӑл шутра крепость комендантне Фрикке генарал-майора, тытӑкна илнӗ.

* * *

Данциг хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланҫинерехре тата хӗвеланҫинерехре Белоруссири 2-мӗш фронт ҫарӗсем ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ. Вӑрманлӑ вырӑнта кӗрешекен совет ҫарӗсем Третен хулипе Мальхов хулине тӑртса илнӗ. Ҫавӑн пекех тата нимӗҫсене Бютов хулинчен 10 километр кӑнтӑр-хӗвеланҫинерехре ларакан Гросс Тухен ялӗпе чугун ҫул станцийӗнчен сирпӗтсе кӑларнӑ. Тӑшман темиҫе хутчен те контратака тунӑ, анчах та нимӗҫсене кашнинчех пысӑк ҫухатусем кӳрсе хӗвалахӑвала янӑ. Кун каҫиччен 2.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейсем нумай тытса илнӗ. 3.500 гитлеровеца тыткӑна илнӗ.

* * *

Белоруссири 1-мӗш фронт ҫарӗсем Померанире ӑнӑҫлӑн наступлени туса пынӑ. Пирӗн танкистсемпе пехотинецсем нимӗҫсен оборонин вӗҫӗлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене пулса тӑракан Бельгард хулине тӑртса илнӗ. Ҫӗмӗрсе тӑкнӑ хыҫҫӑн вӑрмансем тӑрӑх сапаланса пӗтнӗ тӑшман чаҫӗсене пирӗн подразделенисем шыраса тупса пӗтерсе пыраҫҫӗ. Бельгард хули районӗнче 1.300 гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ тата 500 нимӗҫе ытла тыткӑна илнӗ. Нимӗҫсен 14 танкне персе ҫӗмӗрнӗ, шыраса янӑ тата 16 бронетранспортерне ӳнтарса янӑ. Тепӗр участокра пирӗн ҫӑмӑллӑн куҫса ҫӳрекен соединенисемпе пехота тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та хӗвеланҫинелле ытӑкӑнма пуҫланӑ. Совет ҫарӗсем 25 километр тарӑн малалла кайнӑ та Трептов, Графенберг, Плате, Гюльцов хулисене тӑртса илнӗ. Нимӗҫсем Каммин хулине пырса кӗмелли ҫулсем ҫинче ҫиҫӗплесе тӑма хӑтланнӑ, анчах та вӗсене пирӗн танковӑй ҫаҫсемпе пехотинӑй ҫаҫсем ҫав тери хӑвӑрт пырса ҫапса арӑтса тӑкнӑ. Урамсенче кӗске вӑхӑт хушши хаяррӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн Каммин хулине нимӗҫ ҫарӗсенчен тасатнӑ. Тӑшман пысӑк ҫухату тӳсет. Енер Польцин хулине тӑртса илнӗ кавалеристсем 64 паровоз, 1.200 вагон, 700 платформа, 25 танк, «Фердинанд» йышши хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 5 тупӑ, 28 хир тупӑпи, 8 пысӑк склад, 2.000 лаша, ҫар хӑтӗрӗсем тиенӗ 400 лав, 4.000 пуҫ майракалли шултӑра вырӑх тата ытти трофейсем те нумай тытса илнӗ.

Пирӗн авиаци каялла чакакан тӑшманӑн темиҫе колоннине бомбӑсем пӑрахса штурмланӑ, паровозсемпе вагонсене нумай ҫунтарса янӑ е ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче совет летчикӗсем нимӗҫсен 19 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн самолечӗсем пӑрахнӑ бомбӑсенчен иккӗшӗ тӳрех пырса тивнипе Балтияка тиенӗсенче тӑшманӑн 5.000 тонна таякан судни шыва путнӑ.

Флот летчикӗсем кун каҫиччен сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 10 самолетне персе ӳкернӗ.

# Совет Союзӗ тӑрӑх

### ШКУЛСЕН ПЕРРЕМЕШ ҪУР ҪУЛХИ ӖҪӖСЕМ

РСФСР Наркомпросӗ коллегийӗ шкулсен 1944—1945-мӗш вӗренӳ ҫулӗн пиррайхи ҫур ҫулӗнчи ӗҫӗсен итогӗсене сӳтсе-явнӑ.

Иртнӗ ҫур ҫул хушшинче пуринчел ытла 7 ҫула ҫитнӗ ачасене шкула илесси ҫинчен правительство йышӑннӑ постановление пурнӑҫа кӗртес тӗллӗпе тата вӗренӳ пахалӑхне хӑпартас тӗллӗпе ӗҫленӗ. 7 ҫула ҫитнӗ ачасен питӗ пысӑк пайӗ шкула ӳреме пуҫланӑ, шкулсенче вӗрентес ӗҫӗн методики лайӑхланнӑ, малтан вӗреннисене пӗрмаях тепӗр хут аса илсе пырассӗ, учительсем комсомол организацийӗсемпе хытӑрах сыхӑнса ӗҫлеме пуҫланӑ.

Ҫаксемпе пӗрлех, коллеги палӑртнӑ тӑрӑх, пысӑк ҫитменлӗхсем те пур-ха. Обязательнӑй йӗркепе пурне те вӗрентес ӗҫ ҫителӗклӗ пулса пымасть. Чылай шкулсенче хӑшпӗр дисциплинӑсене япӑх вӗрентеҫҫӗ, вырӑс чӗлхипе ют ҫӗршывсен чӗлхисене вӗрентесси тата ҫар ӗҫӗпе физкультура ӗҫне вӗрентесси кирлӗ пек пулса пымасть. Вӗрӗ пирки чылай вӑхӑт хушши шкула ӳрейменнисем ачасене каштнине шкула мӗн чухлӗ вӑхӑт ӳремелле шутласа илсе вӗрентменни пысӑк ҫитменлӗх пулса тӑрать. Ҫак ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе коллеги чылай мерӑсем палӑртса хӑварнӑ. (ТАСС).

### БЕЛОРУССИН ХӖВЕЛАНАҪ ОБЛАҪӖСЕНЧИ ШКУЛСЕНЕ ПУЛАШНИ

РСФСР Наркомпросӗ Белорусси ССР-ӗн хӗвеланҫ облаҫӗсенчи шкулсене вӑйлӑ пулӑшма йышӑннӑ. Унта кӑҫал педагогика институчӗсемпе учитель институчӗсенчен тата аспирантурӑран вӗренсе тухнӑ 60 преподаватель яраҫҫӗ. Барановичи, Брест, Гродно, Молодечно тата Пинск облаҫӗсене 750.000 тенкӗлӗх вӗренӳ пособийӗсем яраҫҫӗ. Учпедгиза ҫав шкулсем валли планран иртерсе 200.000 учебник вырӑсла кӑларса яма хушнӑ. Белоруссин хӗвеланҫ облаҫӗсем валли 50 шкул библиотека хатӗрлеҫҫӗ. (ТАСС).

### ЛЬВОВ ОБЛАҪӖНЧИ ҪӖНӖ МТС-сем

Юлашки вӑхӑтра Львов облаҫӗнче ҫӗнӗрен 7 МТС тунӑ. Халӗ механиксен кадрӗсене хатӗрлеҫҫӗ. Март уйӑхӗнче темиҫе ҫӗр бригадир, трактобист тата слесарь вӗренсе тухмалла. (ТАСС).

### КРИВОРОЖЬЕРЕ ТАТА ТЕПЕР ШАХТА ӖҪЛЕМЕ ПУҫЛАНӐ

Криворожьере Киров ячӗпе тӑракан шахта ӗҫлеме пуҫланӑ. Вӑл ҫав бассейнри чи пысӑк шахтӑсенчен пӗри пулса тӑрать. Нимӗҫ оккупантӗсем ӑна питӗ вӑйлӑ аркатнӑ пулнӑ. Шахтӑра строительствӑпа монтажӑн пысӑк ӗҫӗсене туса ирттернӗ. Ҫӗнӗ копер, машинӑсен ҫуртне тата шахта сийӗнчи ытти ҫуртсене туса лартнӑ. Кривецсем темиҫе пин тонна руда кӑларнӑ та ӗнтӗ. (ТАСС).

### СОЧИ-МАЦЕСТА КУРОРТЕНЧИ СТРОИТЕЛЬСТВО ӖҪЛЕМЕ

Сочи-Мацеста курортӗнче строительство сезонне хатӗрленме тытӑннӑ. Ҫуркунне гидротехникӑллӑ пысӑк ӗҫсем пуҫланмалла. Чи малтан Хура тинӗс ҫыранне ҫирӗплетме йышӑннӑ. Хум касакан хатӗрсем, ҫирӗплетнӗ стенасем тата шыв юхтармаллисем тума палӑртса хунӑ.

Хулана лайӑхлатас ӗҫе те уҫа-тенкӗ нумай каймалла. (ТАСС).

### ЛЬВОВРА ТРАМВАЙ ҪӲРЕМЕ ПУҫЛАНА

Львовра трамвай ҫӳреме пуҫланӑ. Виҫӗ маршрутпа 25 вагон ҫӳреҫҫӗ, вӗсем хула центрне вокзалпа тата хула хӗррисемпе сыхӑнтараҫҫӗ.

Львоври трамвайщиксем нимӗҫсем аркатса тӑкнӑ хӑйсен хуҫалӑхне ура ҫине тӑратас тӗллӗпе пысӑк ӗҫ тунӑ. 110 вагон юсанӑ тата 70 километра ҫити трамвай ҫулне юсанӑ. (ТАСС).

### МИНСК ХУЛИНЧИ ЭЛЕКТРОСТАНЦИ ПРОМЫШЛЕННОҪА ТОК ПАНА

Минск хулинчи 1-мӗш номерлӗ электростанци Совет Белоруссийӗн столицинчи фабрикӑсемпе заводсене ток пана.

Халӗ электростанци хӑватне ӳстерес тӗллӗпе ӗҫлеҫҫӗ. Тата 2 пӗс хуранне юсама пуҫланӑ. (ТАСС).

# Сталин юлташӑн телеграммине ответлесе

Хӗрлӗ Ҫара вӑрҫӑ техники ытларах парса пулӑшас ӗмӗтпе Шупашкарти всевобуч пунктӗнчи боецсемпе командирсем танксен «Боец всевобуча» ятлӑ колоннине тума укҫапа государство заемӗсен облигацийӗсене 25.655 тенкӗ пухса панӑ. Ҫавӑн ҫинчен вӗсем Сталин юлташа ҫырса пӗлтернӗ.

Нумаях пулмасть Шупашкар хулинчи ҫарӗҫ комиссарӗ Ромащенко майор, ВКП(б) Шупашкар, хула комитечӗн ҫарӗҫ пайӗн заведующийӗ Ижойкин юлташ тата Шупашкар хулинчи ҫар комиссариачӗн 4-мӗш пайӗн начальникӗ Виноградов капитан ачӗсемпе Сталин юлташран саламлӑ телеграмма килнӗ. Сталин юлташ Шупашкар хулинчи ҫар ӗҫне вӗренмелли пунктри боецсемпе командирсене, танксен «Боец всевобуча» ятлӑ колоннине тума укҫан тата государство заемӗсен облигацийӗсене 25.655 тенкӗ пухнӑшкерсене, саламлама тата Хӗрлӗ Ҫар тав туни ҫинчен пӗлтернӗ.

Всевобуч пунктӗнчи боецсемпе командирсем Сталин юлташӑн саламлӑ телеграммине пысӑк хавасланӑхпа кӗтсе илнӗ. Ҫак кунсенче ҫар ӗҫне вӗренмелли пункчӗсенче те митингсемпе пухусем пулса иртнӗ. Сталин юлташӑн саламлӑ телеграммипе хавасланнӑ боецсемпе командирсем ҫар ӗҫне татах та лайӑхрах вӗренме, дисциплинӑна ҫирӗплетме пулнӑ.

Боецсемпе командирсем хӑйсен сӑмахне тивӗҫлипе пурнӑҫласа пыма тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫак кунс

# Советлă Чăваш республикин хĕрарăмĕсем

З. А. АНДРЕЕВА
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ

Совет стройĕ çĕнĕ хĕрарăма, хăйĕн Тăван çĕршывне чунтан-чĕререн пăхăнса ĕçлекен хĕрарăма — пысăк та хăватлă çĕршывăн хĕрарăм-хуçине вĕрентсе ӳстерчĕ. «Елĕкхи вăхăтра çынăн пек хĕрарăмсем пулман, пулча та пултарайман» (Сталин).

Чăваш хĕрарăмĕ Октябрьти социализмлă аслă революцинчен пуçлăнса трахомăпа чирленĕ, хут пĕлмен, хăйĕн ăшшĕн е упăшкин семьинче вăл ĕç вăййĕ çе; шутланса тăнă. Совет власĕ вăхăтĕнче чăваш хĕрарăмĕ пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе çĕкленсе тĕрĕ, çуркуннехи чечек хĕвел патнелле туртăннă пек, вăл пĕлӳ патнелле, тулли пурнăç патнелле туртăнчĕ. Чăваш АССР Конституцийĕн 89-мĕш статьинче çапла каланă: «Чăваш АССР-ĕнчи хĕрарăма пĕтĕм хуçалăх, государство, культура тата общественăпа политика пурнăçĕнче арçынпа пĕртан правăсем панă».

Чăваш республикинчи хĕрарăмсем халь хут пĕлеççĕ. Вĕсем ĕлĕкхи йывăр чиртен — трахомăран тата ытти çăвăн пек чирсен чен хăтăлчĕç.

Чăваш хĕрарăмĕсем—государство деятелĕсем. Советсен депутачĕсем хушшинче 3.000 хĕрарăм ытла, вĕсенчен СССР, РСФСР тата Чăваш АССР Верховный Совечĕсен депутачĕсем 34 çын. Темиçе çĕр хĕрарăм—ĕççынни депутачĕсен, район хула тата ял Совечĕсен исполкомĕсен председателĕсем, председатель заместителĕсем тата секретарĕсем пулса ĕçлеççĕ. Çак тĕлĕппе Шупашкар горисполкомĕ пин. тĕ кăтартуллă: унта председателĕн 5 заместителĕнчен 3-шĕ—хĕрарăмсем, отделсен 11 заведующийĕнчен 9-шĕ — хĕрарăмсем; горисполком секретарĕ те хĕрарăм. Чăваш АССР-ĕн Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссарĕ пулса Калинкина ятлаш ĕçлет, вăл ĕлĕк повар пулнă; Социальнăй обеспечени Халăх Комиссарĕ пулса Воронцова ятлаш ĕçлет, вăл ĕлĕк учительница пулнă. Суту-илӳ Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулса Лебедева ятлаш ĕçлет, вăл ĕлĕк суту-илӳ ĕçĕнчи пĕчĕкрех выçăнта ĕçленĕ.

Вăрă пирĕн мирлĕ ĕçе тата пăрахăç хĕрарăмсен пысăк ăшăрлăхсем тӳсме тиврĕ. Вăрçăн пĕрремĕш кунĕнче Шупашкар горвоенкоматне панă заявленисенчен çуррине яхăн хĕрарăмсем çырнă пулнă. Çав заявленисенче патриоткăсем—врачсем, медсестрасем, шоферсем, связисткăсем — хăйсене фронта ямă ыйтнă. Халăхи вăхăтра чăваш хĕрарăмĕсем нумайĕшĕсем фронтра хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Çав фельдшерĕ Федора Гайкина—Вăрмар районĕнчи колхозник хĕвĕ—аманнă боецсемпе командирсене темиçе çĕр çынна çапăçу хирĕнчен илсе тухнă. Ăшăр аманнă лейтенант ӳн нумай кайнă пирки вилме тытăнсан, Гайкина аптăраса ӳкмен вăл, çавăнтах хăйĕн ӳнине 200 грамм ӳхтарса илнĕ те унпа офицера вилĕмрен ăлса хăварнă. Ана Ленин орденĕпе Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăланă. Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса наградăланă Зоя Парфенова летчица та сывлăшра тăшмана ăнăçлăн аркатса пырать.

Тылра ĕçлекен хĕрарăмсем те фронтра кĕрешекеннисенчен юлмаççĕ. Вăрçăн вĕрремĕш кунĕсенчех нумай хĕрарăмсем производствана кайнă—станоксем умне тăнă, трактор çине ларнă, хăйсен упăшкисем тăванĕсем, ашшĕсем вырăнне ĕçлеме пуçланă. Патриотла туйăмпа хавхаланнă 22 колхозăн хĕрарăмĕ Улатăрти чугун çул станцийĕнчи паровоз деповине пынă та Хĕрлĕ Çăран тăван пиччеше пулса тăракан транспорта пулăшма камăл туни çинчен калаçса панă. Елĕк нихăçан та слесарь ĕçне ĕçлеменскерсем, вĕсем халь çак çĕнĕ ĕçе ăнăçлă пуçăннă. Ун чух